*Чăваш пулар, пĕрле утар!*

# Сувар

3№
(473)
эрнекун
кăрлач
уйăхĕн
(январĕн)
17-мĕшĕ,
2003 çул

**Республиканская общественно-политическая чувашская газета**
**Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаçачĕ**



## КĂШАРНИ

Кăшарни (Крещение) — çулталăкра палăртакан чи пысăк вуникĕ Турă праçникĕсенчен пĕри. Ăна православи тĕнне ĕненекенсем кăрлачăн 19-мĕшĕнче уявлаççĕ. «Кăшарни» сăмахăн тӳрĕ пĕлтерĕшĕ — «хĕл эрни». Хăш-пĕр çĕрте чăвашсем ку уява Турă шыва аннă кун тесе те калаççĕ. Çак кун 30 çулхи Иисус Христоса Иордан юханшывĕнче тĕне кĕртнĕ. Çакăнтан пуçланса кайнă та уяв. Праçник кун чиркӳсенче шыва çветить тăваççĕ. Ăна вара çулталăкĕпех килте упраççĕ, мĕншĕн тесен Кăшарнире чиркӳрен илнĕ шыв çав тери сиплĕ шутланать.

Çак кунпа çыхăннă халăх сăнавĕсем те чылай. «Кăшарнире ăшă-тăк — тырпул вăйлă пулать». «Çак кун ăмăр çанталăк пулни — тухăçа, уяр-тăк — çăкăрлă çул пулмасть». Раççейре Кăшарни сивĕсемпе палăрса тăнă. Кăшарни сиввисем чи хаяррисем шутланнă. Тата çакна сăнанă: енчен те Кăшарни сиввисем Раштавпа Сретени сиввисенчен хаяртарах-тăк, тухăçлă çул пулать.

Кăшарни умĕнхи каç тӳпене пăхмалла: çăлтăрсем йăлтăртатса çунни кăçал сурăхсем лайăх ĕрчессине систерет. Енчен те тӳпере пĕр çăлтăр та çук — çулла вăрманта кăмпа пулмасть. Тумла пăрĕсем нумай-тăк, пахча çимĕç ăнса пулать. Йывăççем çинче юр сахал пулсан, çулла вăрманта кăмпа та, çырла та тупаймăн.

### ЖУРНАЛИСТСЕНЕ ЧЫСЛАРĔÇ

Пĕрремĕш Петĕр патша хăй аллипе карапсем тунă, хула хăпартнă, салтак вырăнне çапăçнă. Темĕн те тума пултарнă çавскер. Раççейре журналистсен профессийĕ пуçланса кайнăшăн та ларма-тăма пĕлмен патшанах пархатарламалла. Вăл пуçарнипе çĕршывра 300 çул каялла пĕрремĕш хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухнă. Кăрлачăн 13-мĕшĕнче эпир çак куна паллă турăмăр. Журналистсен çуртĕнче республикăри изданисемпе телерадиоканалсен пуçлăхĕсем пуçтарăнчĕç.

Журналистсене ТР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Фарид Мухаметшин саламларĕ. Вăл Тутарстан Президенчĕ Минтимер Шаймиев ятĕнчен журналистсене пархатарларĕ.

— Кăçал хыпар саракан хатĕрсемшĕн çĕнĕ тапхăр пуçланать, — терĕ ТР премьер-министрĕн çумĕ Зиля Валеева,— вĕсем тĕпрен улшăнаççĕ. Эпир — влаç тата журналистсем — пĕр-пĕринсĕр пурăнаймастпăр.

**Хамăр корр.**

## БАЛТАÇСЕН ТУЛĂХ СĔЧĔ



Эрне пуçламăшĕнче Хусан кремлĕнче Балтаç ферма ĕçченĕсене чысларĕç. Ку питĕ пысăк хисепе районти выльăх ĕрчетекенсем чăннипех тивĕçлĕ. Вĕсем пĕлтĕр кашни ĕнерен вăтамран 5030 килограмм сĕт суса илнĕ. Пĕр енчен çак кăтарту тĕлĕнтермĕш ретне кĕнĕ пек туйăнать. Анчах та района тахçантанпах пĕлекенсемшĕн питĕ пысăк çитĕнӳ юмахри пек сасартăк сиксе тухнă тĕлĕнтермĕш мар.

Минтимер Шаймиев Кремльте малта пыракансене чысланă чухне мана çитмĕлмĕш çулсем аса килчĕç. Çав вăхăтрах балтаççем республикăра сĕт сăвассипе те, аш-какай енĕпе те малта пыратчĕç, фермăсенче ĕçлекенсем тăрăшса вĕренетчĕç, ăратлă пăрусене суйласа илетчĕç, вĕсене уйрăм пăхса ӳстеретчĕç. Хĕллехи вăхăтра апат хатĕрлесе парассине питĕ тимлетчĕç, улăма вĕри пăспа, тĕрлĕрен витамин-тăварсем хушса çемçететчĕç, выльăхсене ăшă шыв ĕçтеретчĕç.

Паян та апата лайăхлатассишĕн тăрăшаççĕ. Анчах... халĕ хушмалли япаласем ĕлĕкхинчен лайăхраххисем пур. Концентрат текеннисем те çителĕклĕ. Тĕпрен илсен, çакна палăртмалла: вăтăр çул каялла тăрăшма пуçланинчен балтаççем нихăçан та чакман, хăйсен меслечĕсене аларан яман, вĕсене лайăхлатса пынă.

Эпĕ ялсемпе ĕçлекен журналист пулнă май чылай фермăсене çитсе куратăп. Пĕрре мар асăрханă: специалистсемпе пуçлăхсем апат хатĕрлемелли цехсем йĕркелеме тытăнаççĕ, хаклă оборудовани те туянаççĕ, анчах пуçланă ĕçе вĕçне çитереймеççĕ, мĕншĕн тесен унăн тухăçлăхне ăнланмаççĕ, ĕненмеççĕ те.

Балтаççем апла мар. Çулран-çул вĕсем пач маларла туртăнса пынă, кашни литр сĕт, килограмм аш хутшăннăшăн савăннă. Çапла кăна пысăк çитĕнӳ пулать. Хăвăрах шухăшласа пăхăр: Балтаç районĕнче пĕлтĕр фермăсен тухăçлăхĕ 15 процента çитнĕ. Çак цифра тĕнчери капиталистсен кăтартăвĕпе танлашать. Апла, пурăнма пулать. Выльăх пăхакансем кунта вăтамран уйăхне 2200 тенкĕ ĕç укçи илеççĕ, хăш-пĕр дояркăсем — 5 пин ытларах. Мĕншĕн тӳлемелли курăнсах тăрать. «Алга» кооперативра Г.Гиматова кашни ĕнерен 8 пин килограма яхăн сĕт суса илнĕ, «Татарстан» кооперативри В.Габдрахманова тата А.Асхадуллина 7,5 пин килограмран, «Алгари» Ф.Мухаметзянова 7 пинрен иртнĕ. Çавăн пек ĕçлесен, паллах, ĕç укçи пулать.

Калас пулать, ĕçĕ çăмăл мар. Нумай сĕт паракан ĕнене пăхма та нумай вĕренмелле. Кунта йăнăшсан ĕне хăвăрт пĕтет, тепĕр хутрете кĕреймест. Çавăнпа та районта выльăх пăхакансене кунсерен вĕрентеççĕ. Вĕсем класлă специалистсем. Фермăсенче кам епле ĕçленине пĕлсе тăраççĕ, кăтартусем выльăх пăхакансен çурчĕсенче ӳкерчĕк вырăнне çакăнса тăраççĕ

Минтимер Шаймиев Балтаç районĕнчи ĕçченсене патшалăх наградисем пачĕ, çирĕп сывлăх, малашне тăнăçлăх сунчĕ.

Премьер-министр çумне — ТР ял хуçалăх тата апат-çимĕç министрне М.Ахметова Хисеп орденĕ, район администрацийĕн пуçлăхне М.Зарипова — Тутарстан Республикин Хисеп грамотине пачĕç.

Савăнăçлă пухăва ТР Премьер-министрĕ Р.Минниханов тата Патшалăх Канашĕн Председателĕ Ф.Мухаметшин хутшăнчĕç.



**Александр ИВАНОВ.**
**Наиль КУРАМШИН**
**сăнӳкерчĕкĕсем.**

## АЧАСЕН ТУСЛĂХ ФЕСТИВАЛĔ




Хĕллехи каникулсен вăхăтĕнче Хусанта СНГ халăхĕсем хушшинчи туслăх клубĕсен фестивалĕ иртрĕ. Ăна тĕп хуламăрăн çывхарса килекен 1000 çулхи юбилейне халалланă. Фестивале вуникĕ регионтан 150 ытла ача хутшăннă. Вĕсем Хусан тата Тутарстан историйĕпе, культурипе паллашрĕç. Унсăр пуçне вĕсем Хусанти 58-мĕш шкулти, А.Алиш ячĕллĕ ача творчестви керменĕ çумĕнчи çамрăк парламентарисен лицейĕнчи, 19-мĕш гимназири «Политолог-дипломат» клуба çӳрекен тантăшĕсемпе тĕл пулчĕç.

Фестивале килнĕ ачасене ТР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Фарид Мухаметшин йышăнчĕ. Çамрăк культура элчисене вăл республика парламенчĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пачĕ, Тутарстанра çамрăксен политикине мĕнлерех тытса пыни çинчен пĕлтерчĕ. Ачасем вара Фарид Мухаметшина фестиваль вăхăтĕнче хăйсем çырса кăларнă мир тата килĕшӳ хартине пачĕç, кашни хăйĕн наци юррине тата ташшине кăтартрĕç.

**Хамăр инф.**



**Сăнӳкерчĕксем Ильдар МУХАМЕТЗЯНОВĂН.**